27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ОКТЯБРЬ 22 ВЫРСАРНИКУН 209(6704) №

Чăваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Вăхăт иртет, хăвăртрах кӗрхи çӗртме тумалла!

Республикăри колхозсенче аслă Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Пирӗн тылри çынсем фронтри паттăрсене нихăш енӗпе те кая юласшăн мар. Çак туйăмпа ӗçлесе, колхозниксемпе колхозницăсем тырпул фронтне çӗнӗрен çӗнӗ çитенӳсем тăваççӗ. [illegible]

[illegible] сем çаканпа лапланса лармаççӗ. Вӗсем кăçал вăйлă тырпул туса илчӗç пулсан, килес çул тырă тухăçлăхне татах та ытларах ӳстерессишӗн халех тăрăшаççӗ. Çапла вара вӗсем çитес çуркунне çуртыррисем акма хӗрсех кӗрхи çӗртме тăваççӗ. Вăрнар районӗ ку енӗпе те республикăри районсем хушшинче пӗрремӗш вырăн йышăнса тăрать, октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне вăл кӗрхи çӗртме тумалли плана 95,3 процент тултарнă. Килес çуркуннехи ӗçсене ытларах çăмăллатас тесе, районри нумай колхозсем кӗрхи çӗртмене планран иртерсе сухалаççӗ.

Вăрнар районӗ хыççăн Элӗк, Шупашкар, Чурачăк районӗсем пыраççӗ, вӗсем ку енӗпе плана 91—86,7 процент тултарнă. Асăннă районсем ялхуçалăхӗнчи ытти ӗçсене те ăнăçлăн ӗлкӗртсе пыраççӗ.

Çакă вăл мӗнрен килнине ялхуçалăхӗпе çыхăнса тăракан кашни çынах ăнланать. Малта пыракан районсемпе колхозсен руководителӗсем пур ӗçе те тӗрӗс организацилеме пӗлеççӗ. Вӗсем: халӗ аван çапмалла, кӗрхи çӗртме ӗçӗ тармасть-ха, ăна юр çăвиччен туса ӗлкӗртӗпӗр, — тесе лармаççӗ. Халăх ӗçне чӗререн парăнса тăвакан çынсен ăсталăхӗ те, тавçăрулăхӗ те пысăк. Вӗсем аван çапас, государствăна тырă турттарас ӗçсене тума ятарласа бригадăсем уйăраççӗ. Лаша вăйне мӗнле те пулин ытларах упраса хăварас тесе, хуçалăхри нумай ӗçсенче, сăмахран, хатӗрлев пунктне тырă турттарнă çӗрте те, вăкăрсемпе, хӗсӗр ӗнесемпе усă кураççӗ. Лашана пули-пулми çӗре турткаламаççӗ. Колхоз председателӗ лаша çитменнине курса тăрать пулсан, хăй каймалли çӗре çуран та утать. Çакăн пек колхозсенче, кӗрхи çӗртмене йывăр ӗç вырăнне хурса, унта ӗçлеме чи вăйлă лашасем уйăрнă.

Анчах пирӗн хăшпӗр çӗрте урăхларах руководительсем те тӗл пулаççӗ. Пӗр-пӗр колхоз председательне, вӗсен колхозӗ юлса пыни çинчен каласан, вăл — пирӗн лашасем сахал, тесе ответлет, çав вăхăтрах хăй хире те лаша çине лармасăр тухса пăхмасть. Тепӗр чухне çавăн пек «пуçлăх», колхоз лашине кӳлсе, базара е тата хăнана та кайса килет. Паллах, çак йышши çынсем ертсе пыракан колхозсенче ӗçсем ăнăçлă пулма пултараймаççӗ. Çавăн пек япăх ӗçлекен руководительсем нумай мар пулсан та, пур-ха вӗсем.

Красноармейски районри Ямайкасси ялсоветне кӗрекен ултă колхозра кӗрхи çӗртмене пӗтӗмпе те 50 гектар ытларах кăна сухаланă. Çав колхозсен председателӗсенчен пӗрисем — лашасем çитмеççӗ тесе, теприсем — МТС çине шанса лараççӗ. Кунти Потемкин ячӗпе тăракан колхоз кӗрхи çӗртме сухине 1,5 гектар сухаланă, «Хӗрлӗ çăлтăр» колхоз вара çав ӗçе тытăнман та. Агротехникăн çак питех те паха мероприятине пурнăçа кӗртессине Ямайкасси ялсовечӗ ертсе пымасть. Ялсовет председателӗ Николаева юлташ: колхозсем çӗрулми кăларса пӗтерсен, пирӗн кӗрхи çӗртме процентӗ ӳсет ак,— тесе тăрать.

[illegible] Кӗрхи çӗртме тумалли плана пирӗн республика октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпе те 58,3 процент [illegible] тултарнă. [illegible] районӗ [illegible] 4-мӗш вырăнта [illegible] октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпе те 57,2 процент кăна тултарнă. [illegible]

Кӗрхи çӗртме тăвас ӗç çавăн пекех Советски, Хӗрлӗ Чутай, Комсомольски, Шăмăршă, Йӗпреç, Первомайски, Чкаловски, Çӗмӗрле, Тăвай районӗсенче те питӗ вăрахăн пырать. Асăннă районсем ку енӗпе плана 52,3—30 процент кăна тултарнă.

Çанталăк кăçал ӗмӗтленнӗ пекех лайăх тăрать. Анчах вăхăт иртсе пырать, часах çӗр шăнтма пуçлать. Çавăнпа та кӗрхи çӗртме тăвас ӗçе васкатмалла. Колхоз руководителӗсен çакна çирӗп асра тытмалла: халь кӗрхи çӗртме туса хăварсан, çуркунне ӗç нумай çăмăлланать, тырпул та лайăхрах пулать, çак ӗçе халь тумасан вара — çуркунне йывăр килет. Никамăн та мар, çуркунне хамăрăннах сухалама лелет çав çӗре!

Çакна ăнланакан колхоз председателӗсем кӗрхи çӗртмене планпа пăхнă чухлӗ çеç мар, килес çул çуртыррисем акмалли пӗтӗм çӗр лаптăкӗ çинче сухаласа хăварма тăрăшаççӗ. Сăмахран, Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тăракан колхозăн план тăрăх кӗрхи çӗртме 360 гектар тумалла пулнă, вăл 420 гектар сухаланă. «Марс» колхоз 430 гектар сухаласа хăварнă. Çакăн пек тăрăшаççӗ те ӗнтӗ ӗçӗн чăн-чăн хуçисем пулса тăракан колхоз председателӗсем.

Ытти ӗçсенчи пекех, кӗрхи çӗртмере те пахалăх çине уйрăмах тимлӗн çавăрăнса пăхмалла. Анчах хăшпӗр çӗрте ӗç хисепӗ хыççăн хăваласа, пахалăхне манаççӗ. Сăмахран, Шупашкар районӗнчи «Строитель», «Кочаковец» колхозсенче Афанасьев юлташ ертсе пыракан трактор бригади кӗрхи çӗртме тумалли плана ăнăçлăн тултарса пырать, сухаласса вара 5—14 сантиметр тарăнӗш кăна сухалать. Тепӗр хут асăрхаттарас пулать: лашапа сухаланă чухне— кӗрхи çӗртмене 16 сантиметр, тракторпа — 20 сантиметр тарăнӗш сухаламалла.

Халӗ нумай колхозсем аван çапса, государствăна тырă парса пӗтернӗ май лашасемпе тракторсем пушанса пыраççӗ. Вӗсене çийӗнчех пурне те кӗрхи çӗртме тунă çӗре куçарас пулать. Кӗрхи çӗртме планне тултарма май пур таран пӗтӗм вăя мобилизацилемелле.

Кӗрхи çӗртме ӗçӗнче сезонри нормăсене тултаракан тата иртерсе тултаракан колхозниксемпе трактористсене пирӗн правительство премисем пама колхозсене сӗннӗ. Партипе комсомол организацийӗсен çавăн çинчен колхозниксене тӗплӗн ăнлантарса парас пулать. Кӗрхи çӗртмере Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлă ăмăртăва, уйрăмăнах çамрăк сухаçăсемпе трактористсен ăмăртăвне, анлăн сармалла.

Парти райкомӗсемпе райисполкомсем, хуçалăхпа политика тӗлӗшӗнчи ытти ӗçсене ертсе пынă пекех, кӗрхи çӗртме тăвас ӗçе те куллен оперативлăн ертсе пыма тивӗçлӗ.

Кӗрхи çӗртме планне тултарассишӗн çине тăрсах кӗрешмелле, çӗр шăнса ларичченех пӗр чарăнмасăр, çаплах ӗçлемелле!

ТАСС опроверженийӗ

Америкăри «Чикаго Сан» хаçат хăйӗн Лондонри корреспонденчӗн пӗлтерӗвне пичетлесе кăларнă. Çав корреспондент çапла калать: Совет Союзӗ Германие оккупацилес ӗçе Франци хутшăнтармалла мар тесе шутлать имӗш. Корреспондент каланă тăрăх, Совет Союзӗ Германие хирӗç вăрçакан пӗчӗк çӗршывсем тӗлӗшпе те çавăн пек позициех йышăнса тăрать имӗш. Кунсăр пуçне, çав корреспондент каланă тăрăхах, Совет Союзӗ çапла сӗнет имӗш: Франци, хăйӗн çӗрӗ çинче йӗрке туса хурса, хăй аслă держава пулса тăнине кăтартса париччен ăна аслă держава тесе шутламалла мар тет имӗш.

ТАСС çапла калама полномочи илнӗ: «Чикаго Сан» хаçат корреспонденчӗн çав сăмахӗсем пурте суя сăмахсем пулса тăраççӗ, вӗсем Совет Правительствин позицине пӗртте тӗрӗс кăтартса памаççӗ.

Поляксен Наци Совечӗн Председателӗ Б. Берут господин, Польша Халăхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн Председателӗ Э. Осубка-Моравский господин тата Польша çарӗсен Главнокомандующийӗ М. Роля-Жимерский генерал-полковник Мускавран кайни

Октябрӗн 19-мӗшӗнче Поляксен Наци Совечӗн Председателӗ Б. Берут господин, Польша Халăхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн Председателӗ Э. Осубка-Моравский господин тата Польша çарӗсен Главнокомандующийӗ М. Роля-Жимерский генерал-полковник Мускавран тухса кайнă. Мускав аэродромӗнче вӗсене СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халăх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский, СССР Наркоминделӗн 4-мӗш Европа отделӗн Заведующийӗ В. А. Зорин, СССР Наркоминделӗн Протокол отделӗн представителӗ Н. Н. Яцкевич тата Оборона Халăх Комиссариачӗн Тулашри çыхăну отделӗн Начальникӗ М. П. Кутузов генерал-майор, çавăн пекех тата Польша Халăхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн Совет Правительстви çумӗнчи представителӗн ӗçӗсене туса тăраканӗ Ст. Ендрыховский господин ăсатса янă.

Паян—государствăна тырă парас ӗçе вӗçлемелли воскресник

Воскреснике организованнă иртерер!

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗпе Чăваш АССР Совнаркомӗ йышăннă тăрăх, паян республикăра государствăна тырă леçсе парас ӗçе вӗçлемелли массăллă воскресник пулса иртет. Республикăри мӗнпур колхозсемпе совхозсен тата подсобнăй хуçалăхсен, тырă паракан уйрăм çынсен пур тӗрлӗ обязательствăсем тăрăх та паян государствăна тырă парса татмалла, планран иртерсе Хӗрлӗ Çар фондне пама йышăннă тырра пӗтӗмпех хатӗрлев пунктне леçсе памалла.

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлă ăмăртăвăн хумӗ колхозлă ялăн активлăхне çӗклентерсе ячӗ. Колхозниксемпе колхозницăсем халӗ кунне-çӗрне пӗлмесӗр ӗçлеççӗ. Колхозниксен ӗçлес, Хӗрлӗ Çара пулăшас кăмăлӗ пысăк. Тăшмана пуçӗпех аркатса тăкса, çӗнтерӳ кунне çывхартассишӗн кашни колхозникпе колхозница чун-чӗререн тăрăшать. Çакна пирӗн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, пӗтӗм совет халăхӗ пекех, пӗрре кăна мар кăтартса панă. Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, Украина колхозникӗсем чӗнсе каланине ырласа, планран иртерсе Хӗрлӗ Çар фондне 500.000 пăт тырă пама пулчӗç. Çак патриотла хисеплӗ ӗçе Шупашкар районӗнчи колхозниксемпе колхозницăсем чи малтан хускатса ячӗç. Вӗсем хăйсем илнӗ обязательствăсене октябрӗн 19-мӗшӗнче ăнăçлăн пурнăçланă. Шупашкар районӗнчи колхозсем малтан 32.000 пăт пама йышăннăччӗ, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вӗсем тата 3.000 пăт пама кăмăл тунă. Çак тырра пӗтӗмпех государство склачӗсене леçсе панă. Çавăнтан хисеплӗ те чыслă ӗç тата мӗн пултăр-ха ӗнтӗ!

Шупашкар районӗнчи колхозсен пархатарлă ӗçӗ ытти районсенчи колхозниксене те хавхалантармалла, вӗсемпе танлашассишӗн пурте вăя шеллемесӗр ӗçлемелле. Халӗ Элӗк, Калинино, Сӗнтӗр тата ытти хăшпӗр районсем те хăйсем илнӗ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççӗ. Муркаш районӗнчи колхозсенчен ӗнерхи кун кăна Хӗрлӗ Çар фондне памалли тырăпа 700 лав ытла кайнă. Калинино районӗнчи 58 колхозран 35-шӗ Хӗрлӗ Çар фондне пама йышăннă тырра октябрӗн 19-мӗшӗ тӗлнех парса татнă. Элӗк районӗнчи колхозсем те государствăна тырă парассине вӗçленӗ, натуроплата тыррине парса татнă тата Хӗрлӗ Çар фондне пама йышăннă тырра та леçсе пӗтернӗ.

Çак районсен государствăна тырă парас тата Хӗрлӗ Çар фондне тырă леçес ӗçри ăнăçлăхӗ пӗтӗмпех вăл ӗçе пӗлсе организациленинчен килӗ. Кунта пӗтӗм туртăм вăйне тырă турттарас ӗçе мобилизациленӗ.

Паянхи кунăн ăнăçлăхӗ район руководителӗсенчен, вӗсем оперативнă ертсе пыма пӗлнинчен, колхозпа колхоз хушшинчи социализмлă пулăшăва организацилеме пӗлнинчен нумай килет. Кашни районрах государствăна обязательство тăрăх тата планран иртерсе Хӗрлӗ Çар фондне тырă парса татнă колхозсем вуншарăн шутланаççӗ. Çакăн пек малта пыракан колхозсем юлса пыраканнисене туртăм вăйӗ парса пулăшмалла. Район центрӗсенчи учрежденисемпе тӗрлӗ хуçалăхсен лашисене, машинисене тырă турттарнă çӗре мобилизацилемелле. Паян уйрăмăнах юлса пыракан Шăмăршă, Кувакино, Чкаловски, Комсомольски, Çӗмӗрле, Первомайски тата ытти хăшпӗр районсем колхозсенчи мӗнпур лашасене, кӳлсе çӳреме вӗрентнӗ майра-каллă шултăра выльăхсене государствăна тырă панă çӗре кӳлмелле. Кунта, паллах, пӗр колхозран тепӗр колхоза социализмлă пулăшу парас майпа лашасем те, çынсем те яма тивет.

Кашни районрах паян çӗршер лавлă хӗрлӗ обозсем организацилемелле. Çапла вара хамăр умма лартнă ответлă задачăна ăнăçлăн пурнăçламалла.

ВКП(б) Обкомӗпе Чăваш АССР Совнаркомӗ массăллă воскресник иртерессия çинчен йышăннă постановленире хатӗрлев пункчӗсем тырра пӗр чăрмавсăр, хăвăрт йышăнма тивӗçлине, хатӗрлев пункчӗсенче тырă илес ӗçре йӗркесӗрлӗхсем пулмалла маррине кăтартса пачӗç. Тырă тиесе пыракан лавсем хатӗрлев пунктӗнче черетре нумай кӗтсе тăмалла мар. Хатӗрлев пункчӗн аппаратӗнчи мӗнпур работниксен хăвăртрах та çаврăнăçуллăрах ӗçлемелле.

ВКП(б) райкомӗсен, райисполкомсен, партипе советăн вырăнти организацийӗсен ответлă та чыслă задачи — массăллă-политикăллă ӗçе сарса пырса, колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăхӗнчи тата хатӗрлев аппаратӗнчи мӗнпур работниксене государствăна срокчен тырă парса татни тата Хӗрлӗ Çар фондне тырă хывни хальхи вăхăтра вăрçăпа политика тӗлӗшӗнчен мӗнле пысăк вырăн йышăнса тăнине тӗплӗн ăнлантарса парасси пулать.

Воскреснике организованнă иртерсе, государствăна пур обязательствăсем тăрăх та тырă парса татар, планран иртерсе Хӗрлӗ Çар фондне пама йышăннă тырра хатӗрлев пунктне йăлтах леçсе парар!

Хӗрлӗ Çар фондне—тырă

ЕТЕРНЕ, октябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Хӗрлӗ Çар фронтра тӗлӗнмелле чаплă çӗнтерӳсем туни колхозниксемпе колхозницăсене савăнтарать, ялхуçалăхӗнче çӗнӗ çитӗнӳсем тума çӗклентерет. Пирӗн районри колхозниксемпе колхозницăсем Украина колхозникӗсем чӗнсе каланине ырласа хапăл турӗç. Колхозсенче пухусем пысăк çӗкленӳпе иртрӗç. Кашни колхозах, государство планӗнчен иртерсе, Хӗрлӗ Çар фондне тырă пама пулчӗ.

Мичурин ячӗпе тăракан колхозра ватă колхозник Романов юлташ (фронтовик ашшӗ) çăмах тухса каларӗ.

— Нимӗç вăрă-хурахӗсем çывăха килнӗ вăхăтсем иртсе кайрӗç. Халӗ ӗнтӗ тăшмана пăвса вӗлерессси кăна юлчӗ. Пирӗн Хӗрлӗ Çар нимӗç фашисчӗсене хăйсен шăтăкӗнче пӗтерсе тăкӗ. Çак ӗçе хăвăртрах тăвас тесен, пирӗн Хӗрлӗ Çара пулăшмалла — терӗ. Колхозниксем, пӗр кăмăллă пулса, Хӗрлӗ Çар фондне 396 пăт тырă хывма пулчӗç. Районӗпе эпир 19.000 пăт паратпăр.

Нумай колхозсем Хӗрлӗ Çар фондне пама йышăннă тырра парса татрӗç те ӗнтӗ. «Парижская Коммуна» колхоз 852 пăт, «Сура» колхоз 732 пăт, «Дружба» колхоз 490 пăт, Тельман ячӗпе тăракан колхоз 443 пăт, Крупская ячӗпе тăракан колхоз 366 пăт хывма йышăннăччӗ. Вӗсем çак тырра хатӗрлев пунктне пӗтӗмпех леçсе панă. Хӗрлӗ Çар фондне хывмалли тырра пӗтӗмпех леçсе памашкăн массăллă воскресник кунӗнче 450 лав ямалла, эпир вӗсене яма пултаратпăр, яратпăр та.

Пирӗн колхозниксемпе колхозницăсен Хӗрлӗ Çара пулăшас кăмăлӗ пысăк. Колхозниксем — Хӗрлӗ Çаршăн, çӗнтерӳшӗн пурне те парăпăр, фронтовиксем умӗнче парăмлă пулмăпăр, — теççӗ.

Г. СПИРИДОНОВ,
Райсовет исполкомӗн председателӗ.

* * *

ИШЛЕЙ, октябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Пирӗн колхозниксем кăçал, тăрăшса ӗçленине пула, пысăк тухăçлă тырпул туса илчӗç. Государствăна тырă памалли обязательствăсене тултарнă хыççăн колхозниксем Хӗрлӗ Çар фондне тырă пама кăмăл турӗç. Украина колхозникӗсем чӗнсе каланине районра социализмлă ăмăртăва вăйлатса ячӗ. Пирӗн колхозсем Хӗрлӗ Çар фондне 24000 пăт тырă пама йышăнчӗç. Паянхи кун тӗлне районри 86 колхозран 54 колхоз хăйсен халь илнӗ обязательствисене чыслăн пурнăçларӗç. Хӗрлӗ Çар фондне памалли тырă пурӗ те 2.000 пăта яхăн кăна юлчӗ. Ăна эпир ыран пӗтӗмпех леçсе пӗтеретпӗр. Малта пыракан колхозсем юлса пыраканнисене пулăшаççӗ. Сăмахран, «Активист» колхоз государствăна тырă парас тӗлӗшпе юлса пыратчӗ. Вăл колхоза эпир, социализмлă пулăшу парас шутпа, Сыбайкасси ялсоветӗнчи колхозсенчен 40 лаша ятăмăр. Массăллă воскресникре Хӗрлӗ Çар фондне памалли тырра пӗтӗмпех парса пӗтеретпӗр.

И. ПИДУГАНОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Фронтран килекен савăнăçлă хыпарсемпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем паянхи кун тӗлне 25.000 пăта яхăн тырă Хӗрлӗ Çар фондне панă. Районри пур колхозсем те хăйсем çине илнӗ обязательствăсене октябрӗн 22-мӗшӗнче пӗтӗмпех пурнăçлама пулчӗç.

* * *

СОВЕТСКОЕ, октябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Хӗрлӗ Çар фондне тырă леçесси районра пысăк çӗкленӳпе пырать. Районри 79 колхозран 34-шӗ хăйсем çине илнӗ обязательствăна чыслăн пурнăçларӗç. Пирӗн районри колхозсем Хӗрлӗ Çар фондне 26.000 пăт тырă пама пулнăччӗ. Паянхи кун тӗлне хатӗрлев пунктне 21.147 пăт леçсе панă.

Сталин ячӗпе тăракан колхоз Хӗрлӗ Çар фондне 700 пăт тырă хыврӗ. Степан Разин ячӗпе тăракан колхоз 1.000 пăт пама йышăннăччӗ. Çак колхозăн председателӗ Андреев юлташ пухура çапла каларӗ:

— Хӗрлӗ Çар çӗнтерӗвӗсем пире, тыл çынсене, лайăхрах ӗçлесе, фронтовиксене вăйлăн пулăшма хушаççӗ. Эпир фронтовиксен ыйтăвне ялан чыслăн ответлеме вӗреннӗ. Фронтовиксене сăмахпа мар, ӗçпе пулăшмалла. Халӗ вăрçă пырать. Вăл вăрçăра пирӗн Хӗрлӗ Çар тăшмана аркатса тăкасси халӗ ӳссӗнах курăнса тăрать. Совет çарӗсем тăшман çӗрӗ çинче çапăçаççӗ ӗнтӗ. Çӗнтерӗвӗн чаплă кунне çывхартас тесен, пирӗн пур ӗçе те вăхăтра тумалла. Эпир Хӗрлӗ Çар фондне 1.000 пăт тырă пама йышăнтăмăр пулсан, ăна паян-ыран хатӗрлев пунктне леçсе памалла, — терӗ.

Андреев юлташ хăйӗн сăмахне пурнăçларӗ. Çав тырра вăл октябрӗн 19-мӗшӗ тӗлне хатӗрлев пунктне пӗтӗмпех леçрӗ.

Вырсарникун пулса иртекен массăллă воскреснике ăнăçлă иртерес тесе, эпир колхоз тата ялсовет председателӗсене пулăшма районра ӗçлекен юлташсене ятăмăр. Воскресник кунӗ кашни колхозах Хӗрлӗ Çар фондне памалли тырра пӗтӗмпех хатӗрлев пунктне ăсатать.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

* * *

ЧУРАЧАК, октябрӗн 20-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем Хӗрлӗ Çар фондне 26.000 пăт пама йышăннăччӗ, паянхи кун тӗлне 20.000 пăт ытла государство складне леçсе панă. Илнӗ обязательствăна паян-ыранах тултаратпăр.

Г. МИТРОФАНОВ.

* * *

Йӗпреç районӗнчи колхозниксемпе колхозницăсем, Украинăри колхозниксемпе колхозницăсем чӗнсе калани çине ответлесе, октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне государствăна планран иртерсе темиçе пин пăт тырă пама пулчӗç.

Хӗрлӗ Çар фондне тырă хывма колхозсенчен район центрне кашни кунах хӗрлӗ обозсем килеççӗ. Ку ӗçпе уйрăмах «Путиловка», «Красный фронтовик», «Правда», «Большавик» колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем кăтартуллă ӗçлеççӗ. Вӗсем октябрӗн 19-мӗшӗ тӗлне хатӗрлев пунктне 2.500 пăт тырă хывнă.

В. РЗАЙ,
М. МАРКОВ.

Укерчӗк çинче: Ишлей районӗнчи «Труд» колхозăн председателӗ В. М. Шишкин юлташ. Вăл ертсе пыракан колхоз, планран иртерсе, Хӗрлӗ Çар фондне 360 пăт тырă хывнă. Юлса пыракан «Активист» колхоза тырă леçме пулăшма 10 лаша янă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Украинăри колхозниксем чӗнсе каланине ырласа
Канаш станцийӗнчи работниксен паха пуçарăвӗ

КАНАШ, октябрӗн 21-мӗшӗ. (Телефонпа). Нумаях пулмасть Канаш станцийӗнчи работниксем Украинăри колхозниксем государствăна тырă памалли плана срокчен тултарма тата планран иртерсе Хӗрлӗ Çар фондне тырă пама чӗнсе каланине сӳтсе яврӗç. Вӗсем, Украина колхозникӗсем чӗнсе каланине ырласа, тырă турттарас ӗçе кăтартуллă организацилеме пулчӗç тата Хусан чугун çулӗпе пӗтӗм Совет Союзӗнчи чугун çулсен работникӗсене хăйсем пек ӗçлеме чӗнсе каларӗç.

Халӗ вӗсем илнӗ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççӗ. Канаш станцийӗн коллективӗ тырă турттарма вагонсем хатӗрлесе парас тӗлӗшпе уйăхри плана 20 кун хушшинчех пурнăçа кӗртрӗ, вагонсем чарăнса тăрассине чакарса пырать.

Октябрӗн 22-мӗшӗнче чугун çул работникӗсенчен тырă пушатнă тата тиенӗ çӗрте ӗçлеме темиçе вунă çын хутшăнаççӗ. Вӗсем колхозниксене лавсем çинчен тырă пушатма пулăшаççӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ОКТЯБРӖН 20-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрӗн 22-мӗшӗнче пирӗн çарсем Çурçӗр Трансильванире малалла тапăнса пынă, ФЕРНЕЗИ-ДЕ-СУС, РОШИОРЬ, ЕГЕРИШТЕ, КИЛИЯ, СОКОИЗЕЛ, КОРНЫ, ХОДОД, БАБУКА, ЧЕХАЛ, ДИЖИР, ИТЭУ ялӗсене туртса илнӗ.

УКРАИНĂРИ 2-мӗш фронт çарӗсем, малалла наступлени туса пырса, утлă çарпа танковăй соединенисем аякран кайса çавăрса илмелли маневр туса иртернӗ хыççăн, çавăнпа пӗр вăхăтрах тата фронтран атакăласа, октябрӗн 20-мӗшӗнче Венгрин пысăк промышленность центрӗ пулса тăракан ДЕБРЕЦЕН хулине — тăшман çулйӗрӗсен паха узелне тата тăшман оборонин питӗ вăйлă тӗреклетнӗ пунктне штурмласа туртса илнӗ.

Югославин СУБОТИЦА хулинчен хӗвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирӗн çарсем Венгри çӗрӗнчи БАЧАЛЬМАШ хулипе чугун çул узелне тата Югослави çӗрӗнчи БАЙМОК, БАЧКА, ТОПОЛА, НОВИ ВРБАС, СРБОБРАН хулисемпе чугун çул станцийӗсене тата ЖЕДНИК, ДУШАНОВАЦ, НОВО СЕЛО, ПАЧИР, СТАРАЯ МОРАВИЦА, БАЙША, ЕМУШИЧ, МАЛИ ИДОШ, СЕКИЧ, ФЕКЕТИЧ ятлă пысăк ялсене туртса илнӗ.

УКРАИНĂРИ 3-мӗш фронт çарӗсем, Югослави халăхӗн ирӗклӗх çарӗсемпе пӗрле вăйлă çапăçнă хыççăн, БЕЛГРАД хулинче нимӗçсен гарнизонне пӗтерсе тăкнă та октябрӗн 20-мӗшӗнче пирӗнпе союзлă пулса тăракан Югослави столицине нимӗç захватчикӗсенчен ирӗке кăларнă.

БЕЛГРАДРАН кăнтăр-хӗвелтухăçнерехре пирӗн çарсем тăшман çарӗсен çавăрса илнӗ ушкăнне пӗтерсе тăкнă. Çак районра октябрӗн 18-мӗшӗпе 20-мӗшӗ хушшинче пулса иртнӗ çапăçусенче пирӗн çарсем 8.147 нимӗç салтакӗпе офицерне тыткăна илнӗ тата çакăн пек трофейсем тытса илнӗ: танксемпе хăй тӗллӗн çӳрекен тупăсем — 20, тӗрлӗ калибрлă тупăсем—318, минометсем—94, пулеметсем—320, винтовкăсемпе автоматсем—6.000 ытла, бронетранспортерсем—20, радиостанцисем—76, автомашинăсем—3.000, çар хатӗрӗсем тиенӗ лавсем—2.250, лашасем—3.500, мотоциклсем—150, тягачсем—24, боеприпас, хӗçпăшал тата ытти çар пурлăхӗн склачӗсем—26. Çапăçу хирӗнче тăшман салтакӗсемпе офицерӗсен 9.000 вилли таран выртса юлнă.

Фронтăн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапăçнă.

Октябрӗн 19-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 189 танкне çӗмӗрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 40 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Çурçӗр Трансильванире пирӗн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пӗр соединени чаçӗсем ту айккисенче тăшман хытă хирӗç тăнине çӗмӗрсе тăкнă та, малалла куçса, Фернези-де-Сус ялне туртса илнӗ. Пирӗн ытти чаçсем вăрманлă тусем урлă каçнă та Сату-Маре хулинчен 20 километр кăнтăр-хӗвеланăçнерехре ларакан Килия ялне тытса илнӗ. Пӗр районра совет танкисчӗсем нимӗçсен çулпа пыракан батальонне хăваласа çитнӗ. Пирӗн боецсем тăшман колоннине атакăланă та 300 гитлеровеца ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Тăрса юлнă нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсем вара хирӗç тăма пăрахса тыткăна парăннă. Çав батальонăн мӗнпур хӗçпăшалне тата боеприпас обозне тытса илнӗ.

* * *

Украинăри 2-мӗш фронт çарӗсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Дебрецен хулинчен кăнтăртарахра пирӗн чаçсем тăшман çарӗсен группировкине йывăр поражени тӳстернӗ. Нимӗçсене хăваласа пырса, совет пехотинецӗсемпе танкисчӗсем Дебрецен хули хӗррине пырса тухнă. Çав вăхăтрах пирӗн танковăй соединенисемпе утлă çар соединенийӗсем, тăшмантан аякран иртсе кайса, Дебрецен хулине хӳтӗлекен тăшман çарӗсен каялла чакмалли çулӗсене пурне те татнă. Тăшмана тавçăрса илсе тавралла оборона йӗркелеме вăхăт памасăр, пирӗн çарсем нимӗçсен пур енчен те хăватлăн пырса çапнă та Дебрецен урамӗсене вăркăнса кӗрсе кайнă. Нимӗçсем хаяр контратакăсем пуçласа янă, вӗсем хулана кирек мӗн пулсан та хăйсен аллинчех хăварасшăн пулнă. Совет чаçӗсем тăшмана урамри çапăçусенче аркатса тăкнă та Венгрин 3-мӗш пысăк хули пулса тăракан Дебрецен хулине туртса илнӗ. Дебрецен хули вăл çулйӗрсен пысăк узелӗ пулса тăрать. Çав хула варринче 7 чугун çул тата 6 шоссе çулӗ пӗрлешеççӗ. Тăшмана çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысăк çухату тӳстернӗ. Дебрецен хулишӗн пынă çапăçусенче нимӗçсемпе венгерсен 2.000 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тăкнă. Трофейсем нумай тытса илнӗ. Тыткăна нумай илнӗ. Дебрецен хулинчи аэродромра нимӗçсен 24 самолетне пӗтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри 3-мӗш фронт çарӗсем, Югослави халăхӗн ирӗклӗх çарӗн чаçӗсемпе пӗрле кӗрешсе, паян ирхине тăшмантан Белград хулин çурçӗр-хӗвеланăç пайӗнчи укреплениййӗсене штурмлама пуçланă. Нимӗçсем питех те лайăх позицисем йышăнса тăнă. Хула гарнизонӗ чи усал эсэсовецсенчен тата суйласа илнӗ полици чаçӗсен салтакӗсенчен тăнă. Совет боецӗсемпе Югослави боецӗсем, пӗчӗк ушкăнсене пайланса кӗрешсе, танксемпе хăй тӗллӗн çӳрекен тупăсем пулăшнипе гитлеровецсене çав тери хăвăрт атакăланă та вӗсен оборонине йӗркерен кăларнă. Пирӗн чаçсем тăшман йышăнса тăракан района савăллана-савăллана кӗнӗ те нимӗç çарӗсене темиçе пая уйăрса янă. Нимӗçсем совет çарӗсемпе Югослави çарӗсем хӗснине чăтса тăрайман. Белграда ирӗке кăларассишӗн пынă çапăçусенче пирӗн боецсем питӗ ăстан тата хăйсене хăйсем хӗрхенмесӗр, питӗ паттăррăн çапăçнă. Танксене пемелли тупăн Джумаев старши сержант ертсе пыракан расчечӗ 3 тупă, 5 автомашина пӗтерсе тăкнă тата гитлеровецсен икӗ ротине сапаласа янă. Мальков кӗçӗн лейтенантăн танксене пемелли пăшалсемпе хӗçпăшалланнă взвочӗ тăшманăн персе тăракан темиçе вырăнне пӗтерсе лартнă. Грунин юлташ командир пулса ертсе пыракан стрелковăй батальонри боецсем нимӗç пехотине пӗр полка çити вӗлерсе пӗтернӗ. 13 тупă, 4 миномет пӗтерсе тăкнă тата 228 гитлеровеца тыткăна илнӗ. Паян кăнтăрла совет çарӗсемпе Югослави çарӗсем Белград хулине пӗтӗмӗшпех йышăннă. Пирӗнпе союзлă Югослави столицине нимӗç захватчикӗсенчен тасатнă.

* * *

Çурçӗр флочӗн карапӗсем Баренц тинӗсӗнче тăшман транспортне, миноносецне тата хурал карапне шыва путарнă.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлă Балтика флочӗн торпедăсем пăрахакан самолечӗсем Балтика тинӗсӗн кăнтăр пайӗнче нимӗçсен пӗтӗмӗшпе 14.000 тонна таякан икӗ транспортне шыва путарнă. Либава районӗнче торпедăсем пăрахакан самолет тăшманăн пӗр пысăк транспортне атакăланă. Торпеда судно çине тӳрех пырса ӳкнӗ. Вăйлă взрыв пулнă, вара нимӗçсен транспорчӗ шыва путнă.

Комсомолăн республикăри активĕн пухăвĕ

Октябрĕн 19—20-мĕшĕсенче Шупашкарта комсомолăн республикăри активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн бюровĕ «ВЛКСМ Чăваш организацийĕн ĕçĕсем пирки» йышăннă постановленин çинчен ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн оргинструкторсен отделĕн заведующийĕн заместителĕ Московский юлташ докладне итлесе сÿтсе-явнă.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ комсомолăн Чăваш организацийĕнчи ĕçĕнче нумай çитменлĕхсене палăртнă. ВЛКСМ Обкомĕпе райкомĕсем пуçламăш организацисене тĕрĕслесе тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçленĕ, активпа таччăн çыхăнса тăман. Çакă вăл комсомол организацийĕн нумай ĕçĕсене сиенлет.

Комсомол организацийĕсем вĕсене организаци тĕлĕшĕнчен çирĕплетсе пырсан кăна лайăх ĕçлеме пултараççĕ. Анчах пулин те ВЛКСМ Обкомĕпе райкомĕсем çак ĕçе пачах çителĕксĕр ĕçленĕ. Çавăнпа республикăри хăшпĕр районсенче комсомолăн пуçламăш организацийĕсем сахалланнă. … ВЛКСМ Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Аверьянова юлташ ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн решенине пурнăçлас ĕçе ку таранччен вăраха ярса пынă.

Комсомолецсемпе çамрăксене политикăллă воспитани парас ĕçре те çитменлĕхсем сахал мар. Çамрăксене хамăрăн Тăван çĕршывăн историйĕпе, хальхи тапхăрти лару-тăрупа паллаштарас, çамрăксене вăрçăпа спорт ĕçне вĕрентес ĕçе тивĕçлипе организацилемен. ВЛКСМ Обкомĕпе райкомĕсене комсомолецсен докладчиксем ушкăнĕсем пур. Вĕсем çак пайра кунччченех вĕрлелле ĕçлеме тытăнман. Çĕмĕрле комбинатĕнче политкружоксем те ĕçлемеççĕ, лекцисемпе докладсене те сахал иртереççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводра тата ытти чылай предприятисенче, артельсенче çавăн евĕрлех. Комсомол организацийĕсем çутĕç учрежденийĕсен ĕçне çĕклес енĕпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Политикăллă-массăллă ĕçе çавăн пек начар организацилени пула, комсомол йышĕ начар ÿсет. Комсомол ретне кăçалхи 2-мĕш кварталта 2111 çамрăка илнĕ пулсан, виççĕмĕш кварталта вара 1668 çын кăна илнĕ. Çамрăксене комсомол ретне илессипе нумай районсем начар ĕçлеççĕ.

Комсомол организацийĕсен организацилемен ĕçе лайăхлатас енĕпе уйрăмăнах тимлĕн ĕçлемелле. Мĕншĕн тесен шкулсенчи организацисене ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн «Комсомолăн шкулсенчи ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртмелле.

Доклад тăрăх пренире пурĕ 25 çын тухса каларĕç. Вĕсем пурте ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн йышăннă постановленин пĕтĕмпе тĕрĕссине йышăнса, комсомол Обкомĕпе райкомĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕç.

Пуху хупăнас умĕн ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем парти организацийĕсем комсомолпа ертсе пырас ĕçе çителĕксĕр ĕçленине пула пулнине палăртрĕ.

Комсомол активĕн пухăвĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Иванов, Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташсем пулчĕç.

Комсомол активĕн республикăри пухăвĕ хăй сÿтсе-явнă ыйтупа решени йышăнчĕ. Вăл решенире комсомол ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе çывăх вăхăтра пурнăçа кĕртмелли мероприятисене палăртса пачĕ.

Т У Л Ă

Пиçрĕ тулă, сарă тулă
Сарлака уйра,
Пĕрчисем питех те тутă,
Пăрçа пек шултра.
Çĕрĕн-кунĕн çывăрмасăр
Выртăмăр хĕрсе,
Пĕр тăкаксăр, пĕр ватмасăр,
Пысăк тимлĕхпе.
Кинемей те кинĕ евĕр
Пирĕнпе пулса,
Çурлине çĕре тĕкмерĕ, —
Вырчĕ ăмăртса.
Халь те куçăм умĕнчех ман
Çÿллĕ çĕмелсем —
Умлăн-хыçлăн та мăнаçлăн
Ларчĕç çĕкленсе.
Украина уйĕнчи пек
Вăйлă вăкăрсем
Кĕлтене кÿрсе кĕретчĕç
Колхоз итемне.

Пиçрĕ тулă, сарă тулă
Сарлака уйра,
Пĕрчисем питех те тутă,
Пăрçа пек шултра.
Вĕри вăрçăн вĕри вутлă
Хирĕнчи çынсем
Татах çапăçчăр хăватлăн,
Паттăррăн тесе —
Малтанхи тулла васкавлăн,
Хăвăртрах çапса,
Леçсе патăмăр хаваслăн
Хамăр станцăна.
Хĕрлĕ Çар валли вăл кайрĕ
Чи малтан тухса,
Пĕттĕр ирсĕр тăшман çарĕ! —
Терĕмĕр, часрах.
Пиçрĕ тулă, сарă тулă
Сарлака уйра,
Пĕрчисем питех те тутă,
Пăрçа пек шултра.

ИВАН МАЛГАЙ.

«ВЕЗУВИЙ» ЯТЛА СПИЧКА КОМБИНАТНЕ ХУТА ЯНА

Гомель хулинче фанерăпа спичкăсем тăвакан «Везувий» комбинатăн чи малтан хута ямалли пайне юсаса хута янă. Комбинат продукци пама тытăннă. Пĕр сменăра вăл 150.000 коробка спичка туса кăларать. Çитес вăхăтра çав комбинатăн производство хăватне икĕ хут ÿстерессĕ.

Белоруссири ытти спичка фабрикисене те юсаса хута ярассĕ. (ТАСС).

Шупашкар районĕнче хăçан вутă хатĕрлеме шутлаççĕ?

Предприятисемпе учрежденисене хĕллехи вăхăтра лайăх ĕçлеме хатĕрлес ĕçре вĕсене валли вутă хатĕрлесси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах та Шупашкар районĕнче çав ответлă ĕçе паян кунччченех хакламаççĕ. Район çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плана тултарман. Районри 25 учрежденирен 8-шĕ кăна вутă хатĕрленĕ. Вĕсем те плана тултарса çитермен. Учреждени руководителĕсем килкартине вутă пырса парасса кĕтсе лараççĕ пулас, вутă хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ.

Вутă хатĕрлесси çавăн пек начар пырать пулин те, райсовет исполкомĕ вăл ĕçе хăвăртлатма шутламасть. Ялсоветсене ĕç вăйĕ мобилизацилеме плансем панă. Çав плансене мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен вара райсовет исполкомĕнче пĕр хутчен те сÿтсе-явман. Çавна пула Лапсар, Чигир, Альгеш тата ытти ялсоветсем пĕр кубометр та вутă хатĕрлемен.

Хĕл кунĕсем çывхарса килеççĕ. Часах акă Атăл урлă каçса çÿреме çул пулмасть. Вутă хатĕрлесе турттарас ĕçе паян-ыранах организацилемесен, районри чылай учрежденисем пачах вутăсăр тăрса юлма пултараççĕ. Вăхăт кĕтмест. Райсовет исполкомĕн вутă хатĕрлемелли плана тултарма халех татăклă мерăсем йышăнмалла.

М. БОГДАНИН.

Муркашпа Советски районсем вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕксĕр параççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрман хуçалăхĕн октябрь уйăхĕнче чугун çул транспорчĕ валли пиншер кубометр вутă хатĕрлемелле. Çак плана тултарма Муркашпа Советски районĕсен кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ мобилизацилемелле. Анчах асăннă районсенчи партипе совет организацийĕсем вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ ярас тĕлĕшпе пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ĕç вăйĕ кирлĕ таран яман пиркиех вăрман хуçалăхĕ сентябрьти плана тултараймарĕ. Октябрь уйăхĕнчи плана тултарасси те хăрушлăх умĕнче тăрать. Паянхи куна вутă питĕ сахал хатĕрленĕ. Турттарас тĕлĕшпе те малаллах кайман.

Муркашпа Советски районсем халĕ, уйхир ĕçĕсем вĕçленсе пынă тапхăрта та, ĕç вăйĕ çителĕксĕр яраççĕ. Советски районтан 195 çын ĕçлемелле пулсан, çуранисем 78 çын, лашапа 60 çын кăна ĕçлеççĕ. Муркаш районĕнчен 185 çын ĕçлемелле, анчах çуранисем 7 çын, лашапа 6 çын çеç ĕçлеççĕ. Паллах, çакăн пек ĕçлесен вутă хатĕрлемелли плана вăхăтра тултарма май çук.

Муркашпа Советски районĕсенчи партипе совет организацийĕсен вăрман ĕçне ĕç вăйĕ çителĕклĕ памалла.

И. МАТВЕЕВ.

Хĕрлĕ ялавлă артельте

СЕНТЕР. Янăмри «Дружба» артель, сентябрь уйăхĕнче вырăнти промышленность предприятисен ăмăртăвĕнче мала тухса, райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ. Вăл сентябрьти плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 143 процент, куллен кирлĕ таварсем кăларас енĕпе 157 процент пурнăçланă.

Çак çитĕнĕве артель коллективĕ ĕçе лайăх йĕркеленипе тума пултарнă. Отечественнăй вăрçă инвалидĕ П. Шувалов юлташ хăйне артель председателĕ пулма суйланă хыççăнах ĕç дисциплинине çирĕплетме, рабочисем валли тухăçлăн ĕçлемешкĕн условисем туса пама тăрăшрĕ, агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатрĕ. Агитаторсем рабочисене фронтсенчи хыпарсене ăнлантарса панипе пĕрлех, малта пыракансен опытне, социализмлă ăмăртăва сарса пыраççĕ.

Артель коллективĕ уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса плана 150 процент ытла тултарма пулчĕ, районри «Дуб» артель коллективне ăмăртăва чĕнчĕ. Халĕ нумай рабочисем хăйсен сăмахне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. А. Васильев, Н. Ятрушев тата ытти нумай юлташсем нормăна яланах иргтерсе тултараççĕ.

Кăçал артель посудăсем, кирпĕч тата вĕрену хатĕрĕсем тăвакан çĕнĕ цехсене ĕçе кĕртнĕ. Çак кунсенче артельте вăкăрсене кÿлсе çÿремелли япаласем тăвакан производство ĕçлеме тытăнать.

Артель коллективĕ, Хĕрлĕ ялава илсе, малашне тата та лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕ.

П. ИСАЕВ.

Черчилльпе Иден господинсем Мускавра пулни çинчен Англипе Совет Союзĕ пĕрле пĕлтерни

Мускавра октябрĕн 9-мĕшĕпе 18-мĕшĕ хушшинче Пĕрлешÿллĕ Королевствăн представителĕсем пулса тăракан Черчилль господинпа Иден господин И. В. Сталин Маршалпа тата В. М. Молотовпа калаçнă, калаçура вĕсен политикăпа çар советникĕсем те пулнă. Юлашки событисене тата Хĕвеланăç Европăри вăрçă пирки Квебекри конференцире йышăннисене шута илсе, Тегеранра килĕштерсе çитернĕ вăрçă планĕсене мĕнле сарса ярса пурнăçласа пынине тĕплĕн пăхса тухнă тата союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен малашне мĕнпур фронтсенче туса ирттермелли операцийĕсем пирки çирĕп шанса тăнине палăртнă.

Пурне те интереслентерекен политикăллă чылай ыйтусем пирки пĕр-пĕрне хăйсен шухăшĕсене ирĕклĕн те уçă кăмăлпа каласа панă.

Польша ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнÿ тунă, çав ыйтăва Совет Правительствипе Британи Правительстви тĕплĕн сÿтсе-явнă. Çав Правительствăсем Польшăн Лондонри Правительствин Премьер-Министрĕпе тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕпе калаçнă. çавăн пекех тата Люблинри Наци Совечĕн Председателĕпе тата Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Председателĕпе калаçнă. Çав калаçусем Польша пирки тĕрлĕ шухăшлассине чылай чакарнă тата пĕр-пĕрне çителĕклĕ ăнланайманнине сирсе янă. Калаçса татăлман ыйтусем пирки калаçусем халь малалла пыраççĕ.

Кăнтăр-хĕвелтухăç Европăри событисене пĕтĕмпех пăхса тухнă. Болгарипе перемири тумалли условисем пирки, халиччен татса паманскерсем пирки, калаçса татăлнă. Югославире каялла чакакан нимĕçсене хирĕç кĕрешме пĕтĕм вăя пухас тесе тата Югославин Король Правительствипе Нациллĕ Ирĕклĕх юхăмне пĕрлештерсе Югославин шалти йывăрлăхĕсене татса парас тесе, икĕ Правительство та Югославире пĕр политикăна пурнăçа кĕртсе пыма килĕшнĕ. Югославире вăрçă хыççăн государство йĕрки мĕнле пулмаллине Югослави халăхĕ хăй татса пама пултарнине, паллах ĕнтĕ, йышăнаççĕ.

Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительстви çав канашлу çинчен пĕлнĕ тата ăна ырланă. Калаçусенче Пĕрлешÿллĕ Штатсен Правительствин представителĕ — Пĕрлешÿллĕ Штатсен Мускаври Посолĕ Аверелл Гарриман господин наблюдатель шучĕпе пулнă.

Великобритани Премьер-Министрĕ У. Черчилль господин тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ А. Иден господин Мускавран тухса кайни

Октябрĕн 19-мĕшĕнче Великобритани Премьер-Министрĕ Уинстон Черчилль господин тата Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Антони Иден господин Мускавран тухса кайнă, вĕсемпе пĕрле Британи Империйĕн Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ А. Брук фельдмаршал, Х. Л. Исмей генерал тата ыттисем те тухса кайнă.

Аэродромра Черчилль господинпа Иден господина тата вĕсемпе пĕрле каякан çынсене çаксем ăсатса янă: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинский тата И. М. Майский, Генеральнăй Штаб Начальникĕн Заместителĕ армии генералĕ А. И. Антонов, Мускав Хули Совечĕн Председателĕн Заместителĕ А. В. Астафьев, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕпе Оборона Халăх Комиссариачĕн ответлă сотрудникĕсем.

Аэродромра тата çаксем пулнă: Великобритани Посолĕ А. К. Керр господин, Канада Посолĕ А. Дан Уилгресс господин, Австрали Посланникĕ Малоней господин, Çĕнĕ Зеланди Посланникĕ Ч. Босвелл господин, Британи Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ Баррос генерал-лейтенант, США Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ Д. Дин генерал-майор, Великобритани Посольствин дипломатиллĕ сотрудникĕсемпе Çар Миссийĕн членĕсем.

Ăсатса янă чухне хисеплĕ хурал тăратнă тата Британипе Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă. Аэродрома Великобританипе Совет Союзĕн флагĕсемпе илемлетнĕ.

У. Черчилль господин каланă сăмах

Октябрĕн 19-мĕшĕнче, Мускавран тухса каяс умĕн, аэродромра кинохроника микрофонĕ умĕнче У. Черчилль господин çапла каланă:

«Сталин Маршал, Сирĕн Превосходительствăсем, кунта пухăннă лэдисемпе джентльменсем, туссем, çарти юлташсем!

Халĕ эпĕ Мускавра чи хĕрÿллĕ ĕçлесе чи кăмăллă пурăннă вăхăтăн вĕçне çитрĕм. Эпир питĕ нумай ĕçлерĕмĕр. Эпĕ ĕнер каçхине каланă пек, эпир хамăр канашлура рабочисем пек тата салтаксем пек пултăмăр, анчах та пире çав тери хисеплесе хăна тунине тата пире пĕтĕм чĕререн савса туслăн йышăннине, саламланине пула, эпĕ тата манăн тусăмпа юлташăм—Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Иден господин çак нумай ĕçсем, пысăк ĕçсем тунă кунсем çинчен питĕ савăнса аса илĕпĕр.

Маншăн ак çакă чи пысăк савăнăç тата пысăк чыс пулса тăчĕ: эпĕ хамăн тусăмпа тата çарти юлташпа Сталин Маршалпа нумай хутчен тĕл пулса нумайччен чунтан-чĕререн калаçрăм тата эпĕ нумай йывăр ыйтусем пирки ĕçлерĕм, çак ыйтусем вĕсем аслă халăхсем вăрçăри йышлă йывăрлăхсем урлă пĕрле малалла утса пырассипе таччăн çыхăнса тăраççĕ.

Эпĕ çакна çирĕп шанса тăратăп: Россия пуçĕнче тăракан полководец — государство деятелĕ — вырăс халăхне, Российăри мĕнпур халăхсене çак аçа-çиçĕмлĕ, тăвăллă çулсем витĕр пуриншĕн те ирĕклĕрех те телейлĕрех пулас ĕмĕрĕн хĕвеллĕ кунĕсем патне илсе кайĕ, çак задачăна пурнăçлас ĕçре унпа пĕрле Британи Наци Туслăхĕн çĕршывĕсем тата Америкăри хăватлă Пĕрлешÿллĕ Штатсем пырĕç».

Ст. Миколайчик, С. Грабский тата Т. Ромер господинсем Мускавран тухса кайни

Октябрĕн 20-мĕшĕнче Ст. Миколайчик, С. Грабский тата Т. Ромер господинсем Мускавран тухса кайнă. Аэродромра Ст. Миколайчик господина тата унпа пĕрле килнĕ çынсене СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн тата Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăну отделĕн представителĕсем ăсатса янă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕ ç ĕ с е м

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Брескенц хулинчен кăнтăралла куçнă, халĕ вĕсем Скоондейек тата Оостбург хулисенчен 2 мильăра тăраççĕ. Союзниксен ытти чăсĕсем Леопольд каналĕ хĕрринчи укреплени патĕнчен малалла кайнă, икĕ ял тытса илнĕ. Çав икĕ енчен пыракан чăссен патрулĕсем Оостбург хулинчен кăнтăртарахри районра пĕрлешнĕ.

Венрай хулинчен кăнтăртарахри районра союзниксен çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнă пулин те, пăртак малалла кайнă. Аахен хулинче кĕрешекен чăссем ăнăçусем тунă. Çав хуларан çурçĕртерехри районă тăшмантан тасатса пыраççĕ.

Мезьер-ле-Мец хулинче çапăçусем пыраççĕ. Эпиналь секторĕнче, Брюйер хули çывăхĕнче, союзниксен çарĕсем çав хуларан çурçĕртерехри çÿллĕ вырăна тытса илнĕ. Союзниксен чăсĕсем Вогез тăвĕсем патĕнче çаплах малалла куçса пыраççĕ.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, йышлă истребительсем хÿтĕлесе пынипе, октябрĕн 19-мĕшĕнче Кăнтăр-Хĕвеланăç Германири Майнц, Людвигсхафен тата Маннгейм хулисен районĕсенчи вăрçă объекчĕсене атакăланă. Октябрĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Штутгарт хулипе Нюрнберг хулине тапăннă. Рейн облаçĕнчи Висбаден хулине те тапăннă.

ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧЕ

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: 8-мĕш арми чăсĕсем Савио шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре нимĕçсем хирĕç тăнине сирсе янă та Римини хулипе Болонья хули хушшинчи çултан 17 мильăра ларакан Чезены хулине пырса кĕнĕ. Чезены хулинчен хĕвелтухăçнерехре 8-мĕш армин Англи чăсĕсем Савио шывĕ патнелле куçса пыраççĕ.

Фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче, Галеатран кăнтăртарахра, 8-мĕш арми пысăках мар ăнăçусем тунă. Болонья хулинчен кăнтăртарахра йывăр çапăçусем пыраççĕ. 5-мĕш армин Америка чăсĕсем, тăшман хирĕç тăнине сире-сире, çаплах малалла куçса пыраççĕ. Çав чăссем Лоренцана хулине ирĕке кăларнă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕ 900 вĕçев ытла тунă.

Нимĕçсем Кăнтăр Грецирен питĕ васкаса чакаççĕ. Англи çарĕсен малти чăсĕсем Фивы хулине йышăннă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Югослави чăсĕсем Сьеница хулине тытса илнĕ, çапла вара нимĕçсен Ибарски ту хушăкĕнчен Лим шывĕн улăхне тухмалли юлашки çулне татнă.

Македонире Югославипе Болгари чăсĕсем нимĕçсене хĕвелтухăç енчен Бардар улăхĕ патнелле хăваласа пыраççĕ. Нимĕçсем Страцин — Куманово — Скопле линийĕ патĕ вăйлă хÿтĕлеççĕ. Çав секторта пĕр кун хушшинче нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата çар техники нумай тытса илнĕ. Нимĕçсем Качаницки ту хушăкне тытса илме хăтланнисем пĕри те ăнăçман.

Метахире Югославипе Албани чăсĕсем Джаковица хулине ирĕке кăларнă та Призрен хулипе Печ хули хушшинчи пур çулсене те татнă. Хĕвелтухăç Боснире Градачац хулине тытса илнĕ, çавна пула Добой хулипе Брчко хули хушшинчи çулпа çÿрессине йĕркерен кăларнă.

Хорватире тăшманăн Загреб хулинчен 4 километрта ларакан св. Клара ятлă çирĕплетнĕ пунктне тытса илнĕ. Загребпа Люблян хушшинчи, Загребпа Кашловац хушшинчи тата Загребпа Брод хушшинчи чугун çулсене 280 тĕлте ытла сирпĕнтерсе янă.

Далмацире Югослави чăсĕсем Херцег хулипе Нови-Дубровник хули хушшинчи пĕр пункта тытса илнĕ, çапла вара нимĕç çарĕсен кăнтăр енчен тинĕс хĕррипе каялла чакмалли çулне татнă.

ВЕНГРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Стокгольмс Тиднинген» хаçачĕ специальнăй корреспонденчĕ Будапештран çапла пĕлтерет: «Венгрири лару-тăрăва ниепле те алла илме май çуккине курса, Салаши Берхтесгадена тухса кайнă. Унта вăл Гитлертан нимĕç çарĕсене Венгрие ытларах яма ыйтнă. Гитлер вăл ыйтнине пурнăçа кĕртме килĕшмен, ун вырăнне вăл Салаши правительствине халех венгерецсен «вилĕм отрячĕсене» тума хушнă. Кунта лайăх пĕлсе тăракан венгерецсем çапла шутлаççĕ: нацистсен Будапештри правительстви октябрĕн 20-мĕшĕнче е 21-мĕшĕнче татăклă кризис тÿсĕ, теççĕ».

ШВЕЦИ ГЕРМАНИЕ ШАРИКОПОДШИПНИКСЕМ ЯМА ПАРАХНИ ÇИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Дагенс Нюхетер» хаçат çапла çырать: «Швецин телеграф агентстви ыйтнипе ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви çакна çирĕплетсе парать: Америкăри хаçатсенче Швеци Германие шарикоподшипниксем яма пăрахни çинчен çырни тĕрĕс. Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви пĕлнĕ тăрăх, шарикоподшипниксене Германие яма пăрахаççĕ».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрĕн 22-мĕшĕнче
К Ă Н Т Ă Р Л А
ачасем валли ÿкернĕ
«З О Л О Т О Й К Л Ю Ч И К»
ятлă саслă, илемлĕ фильм
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16 сехетре.
К А Ç Х И Н Е
саслă, илемлĕ фильм
«Л Е Р М О Н Т О В»
кăтартаççĕ.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать.
Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Ч а с а х
Зоя Космодемьянская
пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ÿкернĕ
«З О Я»
ятлă саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм
кăтартма тытăнаççĕ.

Адмирал Нахимов

Наварин, Синоп тата Севастополь геройĕ — адмирал Нахимов—вырăс флочĕн чи паллă деятелĕсенчен пĕри пулса тăрать. Вăл пирĕн çĕршывăн историне ĕмĕрлĕхех халăх геройĕ пулса кĕрсе юлнă. Унăн пĕтĕм пурнăçĕ, çамрăкран пуçласа Севастополь бастионĕсем çинче ирттернĕ юлашки сехечĕсене çитиччченех, тăван çĕршыва чĕререн парăнса тăнине кăтартакан пример пулса тăрать.

Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕ, талантлă флотоводец, моряксен ăслă учителĕ, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен, тÿрĕ те таса кăмăллă çын, — çакăн пек пулнă Нахимов. Унăн ĕçĕсене пăхса, пирĕн моряксен нумай ăрăвĕсем вĕреннĕ, вĕренеççĕ те.

* * *

Павел Степанович Нахимов 1802 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнче çуралнă. Тинĕс-çар корпусĕнчен çав тери лайăх вĕренсе тухнă хыççăн вăл флота куçнă. Флотра ăна М. П. Лазарев малтанхи çулах асăрханă. Балтика тинĕсĕ çинче малтанхи хут ишни, уйрăмăнах Лазарев ертсе пынипе 1821 çулта «Крейсер» фрегат çинче виçĕ çул хушши тĕнче тавра ишсе çÿреме кайни çамрăк морякăн тата унăн учителĕн шухăшĕсем тĕрĕс пулнине çирĕплетсе панă: Нахимов—тинĕс флочĕ валли çуралнă. Вăл тинĕс çинче пĕтĕмпе 203 уйăх хушши ишсе çÿренĕ, урăхла каласан, тинĕсре вăл 17 çула яхăн пурăннă.

1827 çулта Наварин патĕнче пулнă çапăçу (Грецин никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă вăрçă)—Нахимов лейтенантшăн пирвайхи боевой тĕрĕслÿ пулнă. Çав çапăçура вырăс карапĕсем акăлчансемпе французсен эскадрисемпе пĕрле Турци фронтне хирĕç çапăçнă. Çав çапăçура пулнăшăн Нахимова 4-мĕш степень Георгий орденне панă. Вырăс матросĕн ытарайми пахалăхне — унăн тавçăрулăхне, вăл нимрен те хăраманнине, хăрушă вăхăтра лăпкă пулма пултарнине Нахимов пирвайхи хут çав çапăçура курнă.

«Паллада» фрегат çинче ĕçлеме тытăнсанах, Нахимов çав карапа кăтартуллă

карап туса хунă. Вăл вăхăтра пурăннă çынсем каланă тăрăх, «çав карапа пĕтĕм флот юратнă, нумайĕшĕсем тасалăх тытма, хĕçпăшалсене тата фрегат çинчи йĕркесене вĕренме çав карап çине çÿренĕ».

Адмирал Лазарев, хăйне 1834 çулта Хура тинĕс çинчи флотăн командующине лартнă хыççăнах, хăйĕн ытти вĕренекенĕсемпе пĕрле Нахимова та хăй патне куçарнă. Пулас адмиралăн флотоводец тата вăрçăпа педагогика пахалăхĕсем çавăнта аталанса сарăлса ÿссе кайнă. Вăл матроссемпе офицерсемшĕн калама çук хытă тăрăшнă. Хăшпĕр командирсем халăх çине крепосла вăхăтри пек йĕрĕнсе пăхнине хирĕç кĕрешсе, Нахимов «матрос—карап çинчи тĕп вăй» тенĕ шухăша тимлĕн сарса пынă.

Нахимов моряксене воспитани пама тата вĕрентме яланах питĕ хытă тăрăшнă. «Эпир хамăра çеç юрататпăр пулмасан, эпир тăван çĕршывăн чăн-чăн тарçисем пулса тăратпăр пулсан, акă кама пирĕн çĕклемелле, хăюллă та паттăр пулма вĕрентмелле, — тенĕ вăл моряксем çинчен. —Çакă ĕнтĕ тĕп задача пулать те, эпĕ хамăн пурнăçа çав ĕçе тунă çĕре паратăп, çав задачăна пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетĕп. Эпĕ ăна пурнăçлатăп пуль тесе шутлатăп...»

Ахальтен мар ĕнтĕ матроссем хăйсен начальникне чĕререн юратнă, вĕсем хăйсен йывăр ĕçне яланах пысăк тимлĕхпе, çав тери тăрăшса туса тăнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Севастополь оборони вăхăтĕнче матроссене «Нахимов арăсланĕсем» тесе ят панă.

Мирлĕ вăхăта вăрçа хатĕрленмелли вăхăт тесе шутласа, Нахимов хăйне пăхăнса тăракан çынсене пурне те активлă çапăçу тактикине вĕрентнĕ, çак тактикăна пула вырăс флочĕ нумай хутчен чаплă çĕнтернĕ. Ĕçе хăвăрт та йĕркеллĕ тăвассине вăл питĕ пысăк вырăна хунă, хăюллăн çапăçас шухăш-кăмăлсене сарнă. тăван çĕршыва тата флота чунтан-чĕререн юратма вĕрентнĕ.

Хăйĕн çамрăк çулĕсенче те, адмирал пулса тăрсан та Нахимов яланах тăван çĕршывшăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ. Унăн вырăс флочĕн интересĕсемсĕр пуçне урăх интерессем пулман. хăйĕн матросĕсемпе офицерĕсемсĕр пуçне, урăх çемье пулман. Карап çинче вăл çынсене хытă тытакан начальник пулнă, матроссемпе офицерсене хăйсене хушнă ĕçе питĕ лайăх тума хушнă. Анчах та службăра мар чухне вара вăл аслă юлташ пулнă, ырă кăмăллă, ыттисемшĕн тăрăшакан çын пулнă.

Хăйне пăхăнса тăракан çынсем тата хăйĕн юлташĕсем ăна юратни, хисеплени — ăна ĕçре çĕнĕ вăй парса тăнă, çав çынсенчен кашниех çапăçура хăйĕн тивĕçне пурнăçлĕ тесе ĕнентерсе тăнă. Хăйĕн çыннисене шанни унăн 1853 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче панă приказĕнчен питĕ лайăх курăнать. Çавăн чухне унăн эскадри вăрçă районнелле кайнă. Синоп патĕнче вара тăшмана çĕнтернĕ. Нахимов çав приказра çапла каланă:

«...Хамăн командирсене, офицерсене тата командăсене ĕненсе. çапăçăва чыслăн кĕме шанатăп... Тинĕс-çар ĕçĕнче пĕр-пĕрне çывăх тăни тата пĕр-пĕрне пулăшса пыни — чи лайăх тактика пулса тăрать. Командирсене çакăн çинчен пĕлтеретĕп: хамăртан вăйлăрах тăшмана тĕл пулсан, эпĕ ăна атакăлатăп, пиртен кашниййĕ хăйĕн ĕçне тăвассине çирĕп шанса тăрса çапла тăватăп», — тенĕ.

Синоп патĕнчи çапăçура Нахимовăн çар искусстви татах та лайăхрах палăрнă; вăл тăшман мĕн тума шутланине тавçăрса илме пĕлнĕ, ĕçе тăшмантан маларах тунă, тăшмана пĕтерсе тăкнă.

Кавказ çыранĕ — тăшман тапăнас енчен чи хăрушă район пулса тăнине, унта тăшман десант антарма пултарнине пĕлсе, Павел Степанович Синоп патĕнчи çапăçуччен икĕ уйăх малтанах Одессăран Анакрийăна (Поти портĕнчен çурçĕртерехре) хăйĕн карапĕсем çине лартса пĕр пехотнăй дивизи куçарнă, çав дивизин артиллери тата темиçе çĕр лаша пулнă. Босфортан хĕвелтухăçнерехре тăшман карапĕсем курăнни çинчен хыпар илсен, вăл ăна шырама тытăннă, вара Синоп патĕнче тупнă. Çĕнĕ вăйсем пыриччен çав бухтăна хупăрласа илсе, хăюллă командир, тăшмана пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалли план туса, ăна пурнăçа кĕртнĕ. Тăмшанăн 7 фрегат, 2 корвет, пĕр шлюпка, 2 транспорт тата пĕр пароход пĕтнĕ. Нахимов çапăçура карапсен ĕçĕсене хăй ертсе пынă, вăл карапсем курнă сиенсене ишсе пынă çĕртех тÿрлетнĕ те хăйĕн мĕнпур суднисене Севастополе илсе çитернĕ. Унăн командирĕсенчен 38 çын çеç пĕтнĕ. Синоп патĕнчи çĕнтерÿ Нахимов темисе çул хушши тăрăшнине вырăнлă туса хунă, тÿрре кăларнă. Вăл унăн флота ертсе пырас чаплă искусствине çав тери лайăх кăтартса панă.

«Мана панă эскадра, — тесе пĕлтернĕ Нахимов, — Турцин Синоп патĕнче, батарейăсем хушшинче тăнă эскадрине атакăларĕ те ăна икĕ сехетрен пĕтерсе тăкрĕ... Флагманпа капитансем хăйсен ĕçне лайăх пĕлнине тата хăйсен вĕçĕ-хĕррисĕр паттăрлăхне кăтартса пачĕç, вĕсене пăхăнса тăракан офицерсем те çавăн пекех пулчĕç; кĕçĕн чинсем вара арăслансем пекех çапăçрĕç...»

Севастополе паттăррăн хÿтĕленĕ çĕрте Нахимов калама çук пысăк, калама çук паха ĕç тунă. Вăл Севастополе хÿтĕлес ĕçĕн чĕри, унăн организаторĕ, ăна хавхалантаракан çын пулнă. Унăн паттăр ĕçĕсене шутласа та тухайрас çук. Вăл яланах чи кирлĕ, чи хăрушă вырăнта пулнă, вăл çынсене хăй пырса çитнипех хаваслантарнă, хавхалантарнă.

1855 çулхи март уйăхĕнче Нахимов вице-адмирала адмирал туса хунă. Çавăн пирки панă приказра вăл хăй çапла çырнă: «Хăйсен начальникне хăйсен паттăрлăхĕпе илемлетсе тăракан çынсем мана пăхăнса тăни — маншăн ыттисем хапсăнмалла телей пулса тăчĕ... Матроссем! Тăван Севастополе тата флота хÿтĕленĕ чухне эсир тунă паттăр ĕçсем çинчен манăн каламалла-и вара? Эсир тăрăшса ĕçленине тата ĕçшĕн вилме хатĕр тăнине эпĕ мĕн çамрăкранпах курса тăнă; эпир тахçантанпах туслашнă, эпĕ сирĕнпе мĕн ачаранпах савăнса мухтанатăп...»

Тăшман пульли 1855 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче Севастопольри çапăçусене хавхалантаракан çыннăн, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен çыннăн пурнăçне татса пăрахнă. Нахимов вилнĕ. Вăл вилни пĕтĕм Российăшăн калама çук пысăк хуйхă пулнă. Севастополе хÿтĕлекенсем Нахимовăн чапне çĕршывăн мĕнпур кĕтессисене сарнă. Нахимов вăл хăй пурăннă вăхăтрах халлапри пек çын пулса тăнă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00756. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.